# Справедливая Россия

## Анатолий Аксаков: "Промышленноçа, ял хуçалăхне аталантарас, пенсисемпе пособисене ӳстерес тата халăха социаллă пулăшу парас ĕçре стабилизаци фончĕн аталану Банкĕ, нефтьпе газ сутса тунă укçа-тенкĕпе усă курмалла"

МĔН ТУНĂ

Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думин депутачĕн Анатолий Аксаковăн запросне пурнăçласа çак объектсене ĕçе кĕртме тата реконструкцилеме укçа-тенкĕ уйăрса пани –

ача-пăчан восстановительнăй сывату центрĕ (Шупашкар)

Туберкулеза хирĕç кĕрешекен ача-пăча санаторийĕ (Улатăр районĕ).

Ветерансемпе инвалидсен реабилитаци центрĕ. (Шупашкар районĕ)

Шупашкарти, Çĕнĕ Шупашкарти, Улатăрти, Çĕрпӳри, Криуш, Ярту ялĕсенчи çырансене çирĕплетес тĕлĕшпе тумалли ĕçсем.

Шупашкарти, Куславккари, Çĕмĕрлери, Шуршăлти, Октябрьскинчи тата хуласемпе районсенчи коммуналлă сетьсем

"Высоковка- Канаш" водовод (Канаш)

Газопровод отводсем (Шупашкар, Елчĕк)

Чăваш Енри Федераллă тата ял çулĕсем

Чăваш патшалăх университечĕн, ял-хуçалăх академийĕн, Шупашкарти патшалăх педагогика университечĕн вĕренӳ корпусĕсем

Профессипе техника училищи (Çĕрпӳ)

Куславккари, Тĕрлемесри, Октябрьскинчи вăтам шкулсем

К.Иванов ячĕпе хисепленекен Чăваш патшалăх академи драма театрĕ

Чăваш наци музейĕ

Чăваш патшалăх культура институчĕ

"Олимпийски стадионĕ" (Шупашкар)

Белые камни" сывлăха çирĕплетекен лагерь (Сĕнтĕрвăрри районĕ)

Виççĕмĕш номерлĕ СДЮШОР спорткомплекс (Çĕнĕ Шупашкар)

Тăваттăмĕш номерлĕ СДЮШОР пăр стадионĕ (Çĕнĕ Шупашкар)

Улатăрти, Çĕмĕрлери, Шăхасанти (Канаш районĕ), Кукесри (Шупашкар районĕ) физкультурăпа сывлăха çирĕплетекен комплексĕсем

МĔН ТУМАЛЛА

Ĕçшĕн тӳлессине тата пенси шайне виçĕ хутчен ӳстермелле

Ĕç укçине индексацилессине пĕр вĕçĕмсĕр туса пымалла

Аслă шкулсемпе техникумсенче вĕреннĕ, амăшĕсем ача пăхса ларнă, çар сотрудникĕсен мăшăрĕсем, упăшкисем Инçетри гарнизонсенче службăра тăнă вăхăтсене йăлтах ĕç штатне кĕртмелле

Пур пенсионера та хула транспорчĕпе тӳлевсĕр çӳреме май туса памалла.

Хаксем ӳсессине тытса чармалла

Мул çине хуракан налука йĕркелемелле

Гражданасем перекетленĕ укçа–тенкĕне пĕтĕмпех парса татас тĕлĕшпе патшалăх йышăннă обязательствăсене туллин пурнăçламалла.

Бюджетран укçа илекенсене (врачсене, учительсене, ученăйсене, культура работникĕсене) кирлĕ гарантисем парса патшалăх служащийĕсемпе танлаштармалла

Сахал пурлăхлă çемьесен çурт-йĕр ыйтăвне татса парас тĕллевпе массăллă строительствăн "Кăмăллă çурт – Справедливый дом" программине ĕçе кĕртмелле.

Строительствăн перекет кассине туса хумалла. Унта çурт-йĕр лартма кирлĕ укçан 25-30 процентчĕ пухăнса пытăр. Ытти 70-75 процентне вăрах вăхăт тата пĕчĕк процентпа Граждансем перекетленĕ укçа–тенкĕне пĕтĕмпех парса татас тĕлĕшпе патшалăх йышăннă обязательствăсене туллин пурнăçламалла.

Коммерци тĕллевĕсене пурнăçлассишĕн çын пурăнакан çурт-йĕре ирĕксĕр пăсассине, çĕннине таччăн тăвассине чарса лартмалла

Строительство тата инженери инфраструктура предприятийĕсене техника енчен çĕнетес, федераллă тата вырăнти пĕлтерĕшлĕ çулсем тăвас ĕçе пурнăçлама вуншар миллиард тенкĕ укçа уйăрмалла

Химпромра тата республикăри электротехника, приборсем тăвакан тата ытти предприятисенче производство хăвачĕсене модернизацилемелле тата пысăк технологисемпе тивĕçтермелле

Чăваш Енри çынсем пурăнакан кашни вырăна асфальт çулĕсем çитермелле

Ял хуçалăхне, паянхипе танлаштарсан, çулсерен икĕ хут ытларах укçа-тенкĕ памалла

Ялсенче çурт-йĕр лартакансене пулăшас тĕллевпе патшалăхăн мĕн пур расхутсен 50 процентне хăй çине илмелле.

Взяткăсемшĕн тата служба тивĕçĕсемпе саккунсăр усă курнăшăн наказани парассине вăйлатмалла

Чиновниксене пĕр вăхăтрах патшалăх службин тата бизнесăн ĕçĕсене туса пыма чаратпăр.



Чиновниксене хăйсен тупăшĕсем пирки çеç мар, çемье членĕсен тупăшĕсем, пурлăхĕ, мулĕ пирки те халăха пĕлтерсе тăма хушатпăр.

Взятка илнĕшĕн тата хыснана çаратнăшăн условнăй майпа наказани памалли сакккунсене улăштаратпăр

Ял хуçалăх продукцине сутăн илмелли хаксене патшалăх енчен тĕрĕслесе тăрассине вăйлатмалла.

Çителĕксĕр пурăнакан граждансен çурт-йĕр проблемисене татса парас тĕллевпе "Справедливый дом" массăллă строительство программине ĕçе кĕртмелле.

"Справедливая Россия – Тӳрĕ кăмăллă Раççей" партишĕн – списокри 8-мĕш номершĕн – сасăла!
Тӳрĕ кăмăл! Саккунлăх! Çителĕклĕ пурнăç!

Материал тӳлевлĕ йĕркепе пичетленет.

### Аннесен кунĕ ячĕпе

## "Çамрăк çемье – сывă çемье"

Ноябрĕн 16-мĕшĕнче район администрацийĕн çуртĕнче çамрăк çемьесен фестивалĕ пулса иртрĕ. Чылайăшĕ астăвать пулĕ, март пуçламăшĕнчех конкурс виçĕ тапхăрпа иртессине пĕлтернĕччĕ. Чăн та, çамрăк çемьесем виçĕ тапхăрĕнче те активлă пулчĕç. Акă тăхăр çемье савăнăçлă самантa хутшăнчĕ. Фестивале хутшăнакансене район пуçлăхĕ Юрий Александрович Иванов, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем, "Çулталăкри çемье – 2007" конкурс çĕнтерӳçи Апроськинсен çемйи саламларĕç.

Фестиваль программи анлă та интереслĕ пулчĕ. Куракансем вара кашни çемьепех тĕплĕн паллашма пултарчĕç. Конкурса активлă хутшăннă Никитинсен (Уйкас Янасал ял тăрăхĕ), Черновсен (Ильинка ял тăрăхĕ), Ерзуковсен (Çатракасси ял тăрăхĕ) çемйисем ăсталăхпа палăрчĕç.



Пĕр-икĕ сăмахпа вĕсем çинчен асăнса хăварар-ха. Акă Никитинсен çемйинче икĕ ача ӳсет. Иванпа Таисия мăшăрланнăранпа 11 çул çитрĕ ĕнтĕ. Вĕсем иккĕшĕ те Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăхра тăрăшаççĕ. Çемье девизĕ вара çапларах : "Эпир савăк та хăюллă, пур ĕçре те шанчăклă!" Чăн та çакă вĕсен чылай ĕç-хĕлĕнче курăнса тăрать.

Черновсен çемйи вара "Юратупа ăнланулăх – çирĕп çемье никĕсĕ" чĕнӳпе малалла туртăнать. Çемьере икĕ хĕр ӳсет. Чернов Алексей Валерьевича шăпа Чечен Республикинех илсе çитернĕ. Унăн мăшăрĕ Нина Арсентьевна, чун-чĕрипе юрă-кĕвĕ тĕнчине парăннăскер, Ильинка шкулĕнче музыка учителĕнче вăй хурать. Çав хушăрах Тренккăри Культура çурчĕ çумĕнчи художество пултарулăх коллективне ертсе пырать.

Наталья Михайловнапа Алексей Николаевич Ерзуковсем сакăр çул пĕр-пĕрне хисеплесе пĕр çемьере пурăнаççĕ. Вĕсен Вероника ятлă хĕр ӳсет. Унăн амăшĕ Çатракасси шкулĕнче ĕçлет, ашшĕ вара "Свобода" хуçалăхра механизатор пулса тăрăшать.

Конкурс программине тĕрлĕ номинацисемпе пуянлатнă. "Çирĕп çемье – çирĕп кил-çурт" номинаци çĕнтерӳçи Муркаш ял тăрăхĕнчи Поповсен çемйи пулчĕ. "Эпир юрăç та музыкçă – çемье ăстасемпе пуян" номинацире Хорнуй ял тăрăхĕнчи Ярутковсем палăрчĕç. "Çемье летопиçĕ" номинаци вара Москакасси ял тăрăхĕнчи Волковсен интереслĕрех пулчĕ. Хорнуй ял тăрăхĕнчи Васильевсем "Вăхăтпа пĕр тан пырар" номинацире палăрчĕç. "Пурнăç тăршшĕпе юратупа ăнланулăхпа утар" номинаци çĕнтерӳçи Юнкă ял тăрăхĕнчи Красновсен çемйи пулчĕ. Вĕсене пурне те ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем саламларĕç, парнесем парса хавхалантарчĕç.

Ярапайкасси ял тăрăхĕнчи Борзаевсен çемйи конкурсăн виçĕ тапхăрĕнче те çĕнтерчĕ: "Çамрăк çемье – 2007" титула тивĕçрĕ. Çĕнтерӳпе вĕсене Ярапайкасси ял тăрăхĕн тата район администрацийĕн пуçлăхĕсем саламларĕç.

Çавăн пекех район аталанăвĕнче пысăк тӳпе хывакан çамрăк ултă çемье Тав çырăвĕсене тивĕçрĕ. Фестиваль юрă-ташăпа татах та илемлĕн курăнчĕ. Çак кун вара Москакасси ял тăрăхĕнчи Яндушкинсем çĕнĕ çемье çавăрчĕç. Пĕрлешнине çирĕплетекен свидетельствăна район пуçлăхĕ Юрий Александрович Иванов пачĕ, çирĕп сывлăх, иксĕлми телей сунчĕ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

**Сăн ӳкерчĕкре: Борзаевсем.**

### Ырă ятлă

## Тĕп тивĕç – çынсен кăмăлне тивĕçтересси

Юлашки вăхăтра пирĕн çĕршывра, çав шутрах пирĕн районта та, пурнăç çав тери нумай улшăнчĕ. Çакă кашни отрасльтех сисĕнет. Çавăнпа та, паянхи хутшăнусене пăхса, кирек епле специалист пулсан та, ĕçе йĕркелеме пĕлни, пурнăçпа тан пыма пултарни паян малти вырăнта тăрать.

Хальхи вăхăтра райпо магазинĕсенче анчах мар, пасарсенчи суту-илӳ точкисенче те тем тĕрлĕ апат-çимĕç, промышленноç таварĕсене туянма пулать. Анчах та пур чухне те çынсене вĕсен пахалăхĕ тивĕçтермесен те пултарать. Райпо магазинĕсенче туяннă тавар пирки вара иккĕленӳ çук. Çынсен кулленхи ыйтăвĕсене лайăх пĕлсе тăрса, вĕсен кăмăлĕсене туллин тивĕçтересси – акă мĕн малти вырăнта паян кунти специалистсемшĕн.

Н.М. Шурнова Муркаш райповĕнче товаровед пулса вăтăр çул ытла тăрăшать. Вăл Юнкă ялĕнче çуралса ӳснĕ, шкул пĕтернĕ хыççăн кооперации техникумĕнче вĕреннĕ, хыççăн кооперации институчĕн экономика факультетĕнче аслă пĕлӳ илнĕ. Вăл хăйĕн ĕçĕнче явапа яланах туять. Унăн тĕп тивĕçĕ – райпо территорийĕнчи магазинсене, обществăлла апатлану предприятийĕсене тĕрлĕ таварсемпе тивĕçтерессии. Вĕсен тивĕçĕ шутне промышленноç таварĕсемпе тивĕçтересси те кĕрет. Малтан ăçта мĕн кирлĕ пирки заявкăсем пуçтараççĕ, хыççăн вĕсемпе магазинсене тивĕçтереççĕ.

Юрататъ Нина Михайловна хăйĕн ĕçне, чунне парса тăрăшать, коллективра та хисепре. Вăл обществăлла ĕçсенче те активлă. Сакăр çул хушши Н. Шурнова профком председателĕ пулнă. Пуçарулăхĕшĕн, тăрăшулăхĕшĕн хăйсен отраслĕнчи Раççей профсоюзĕн тата предпринимательсен; Раççей профсоюзĕн 100 çулхи юбилейĕ Хисеп грамотисене тивĕçнĕ. Хăйĕн кăмăлне кура, профсоюз ертӳçи пулнă май, вăл спортпа та туслă пурăннă, "Чувашсоюз" системинчи ăмăртусене хутшăннă.

Н.М. Шурнова çав тери сăпайлă та ырă кăмăллă хĕрарăм. Мăшăрĕпе виçĕ ача ӳстернĕ, иккĕшĕ аслă пĕлӳ илнĕ, виççĕмĕшĕ вĕренет.

Çак кунсенче Нина Михайловна хăйĕн юбилейне паллă тăвать, мал ĕмĕтпе ĕçлесе пурăнать. Телей те ăнăçу, çирĕп сывлăх сунар ăна малашнехи ĕçĕнче, кулленхи пурнăçра. Вĕсем хăйсен тивĕçĕсене пурнăçласан, районти çынсене те пурăнма лайăхрах пулĕ.

**А. ЧЕРНОВА.**

### Объявления

**Рекомендации участников публичных слушаний по проекту бюджета Моргаушского района на 2008 год.**

1. Одобрить проект бюджета Моргаушского района на 2008 год.
2. Рекомендовать:

- администрации Моргаушского района обратить внимание на увеличение собственной доходной базы, создание условий для развития малого предпринимательства
- постоянной комиссии по бюджету, финансам, экономической деятельности, налогам и сборам Моргаушского районного Собрания депутатов рассмотреть предложения участников публичного слушания;
- Моргаушскому районному Собранию депутатов принять проект бюджета Моргаушского района на 2008 год в установленном порядке в соответствии с требованиями законодательства Российской Федерации, Чувашской Республики и Устава Моргаушского района.

Рекомендации приняты участниками публичных слушаний
22 ноября 2007 г.

**Рекомендации участников публичного слушания по проекту внесения изменений и дополнений в Устав Моргаушского района**

1. Одобрить проект решения о внесении изменений и дополнений в Устав Моргаушского района Чувашской Республики
2. Постоянной комиссии по местному самоуправлению, законности, правопорядку и депутатской этике Моргаушского районного Собрания депутатов рассмотреть предложения участников публичного слушания
3. Рекомендовать Моргаушскому районному Собранию депутатов принять решение о внесении изменений и дополнений в Устав Моргаушского района в установленном порядке в соответствии с требованиями законодательства Российской Федерации и Чувашской Республики.

Рекомендации приняты участниками публичных слушаний
22 ноября 2007 г.

**К сведению избирателей!**

Изменились номера телефонов избирательных участков по выборам депутатов Государственной Думы Федерального Собрания пятого созыва.

С участковыми избирательными комиссиями избирательных участков можно связаться по следующим телефонам:

Шомиковский № 538 – 35-2-62
Сятракасинский № 546 – 68-2-18
Кашмашский № 547 – 68-2-58
Оточевский №548 – 68-7-16
Ятманкинский № 549 – 68-7-36
Сюткюльский №552 – 64-2-65
Тойшевский №554 – 64-2-62.